Книжная Палата

28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ИЮНЬ
3
ВЫРСАРНИКУН
106(4857) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА
СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Паттăр халăхăн паттăр çарне — мухтав!

«Хамăр Тăван çĕршывăн никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе хăварнă тата тăшмана çĕнтернĕ пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çара мухтав!»

Сталин юлташăн историллĕ Çĕнтерӳ кунĕнче каланă çак сăмахĕсем пирĕн халăхăн чĕререн тухакан кăмăлне палăртрĕç. Хуласемпе ялсенче, аслă Совет çĕршывĕн пĕр хĕрринчен пуçласа тепĕр хĕррине çитиччепех пĕтĕм халăх Хĕрлĕ Çарăн хастарлă воинĕсене—унăн Маршалĕсене, генералĕсене, офицерĕсене, сержанчĕсене тата боецĕсене мухтать.

СССР Верховный Совет Президиумĕн чи лайăх, чи палăрнă воинсене орденсемпе тата медальсемпе наградăласси çинчен калакан Указĕсене совет çыннисем тулли кăмăлпа йышăнаççĕ. Çакă вăл хамăр Тăван çĕршыв панă награда пулса тăрать. Вăл хамăр Тăван çĕршывшăн хăйсен вăйне те, пурнăçне те шеллемесĕр çапăçнă çынсене, Отечественнăй аслă вăрçăн çапăçусенче пысăк ăсталăх кăтартнă çынсене, хастарлăн, паттăррăн тата пĕлсе çапăçса, тăшмана историре халиччен пулман пек çĕнтернĕ çынсене юратнине, хисепленине, чунтан-чĕререн тав тунине кăтартакан паллă пулса тăрать. Наградăланисем хушшинче эпир чапа тухнă сталинла полководецсен, Отечественнăй аслă вăрçăри чи чаплă çапăçусенче пысăк хăюлăхпа хастарлăх кăтартнăскерсен ячĕсене, паттăр совет генералитечĕпе офицерĕсен чи лайăх представителĕсен ячĕсене. Командовани панă боевой заданисене пурнăçланă чухне уйрăмах палăрнă сержантсемпе рядовой боецсен ячĕсене куратпăр.

Паян эпир Совет Союзĕн Маршалĕсене Жукова, Рокоссовские тата Конева наградăласси çинчен СССР Верховный Совет Президиумĕ кăларнă Указсене пичетлетпĕр.

Совет Союзĕн Геройне Георгий Константинович Жуков Маршала виççĕмĕш хут «Ылттăн çăлтăр» медальпе наградăланă. Вăл çав чаплă наградăна нимĕç захватчикĕсене хирĕç Берлин районĕнче пынă çапăçусене ертсе пырас тĕлĕшпе Верховнăй Главнокомандовани панă боевой заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн тата çав çапăçусене пула татăклă çитĕнӳсем тунăшăн илме тивĕçлĕ пулчĕ. Совет Союзĕн Геройне Константин Константинович Рокоссовский Маршала Померанипе Мекленбург районĕнчи çапăçусене ертсе пырас тĕлĕшпе Верховнăй Главнокомандовани панă боевой заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн тата çав çапăçусене пула тунă çитĕнӳсемшĕн иккĕмĕш хут «Ылттăн çăлтăр» медальпе наградăланă. Совет Союзĕн Геройне Иван Степанович Конев Маршала нимĕç захватчикĕсене хирĕç Прага районĕнче тата Берлинран кăнтăртарахра пынă çапăçусене ертсе пырас тĕлĕшпе Верховнăй Главнокомандовани панă боевой заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн тата çав çапăçусене пула тунă çитĕнӳсемшĕн иккĕмĕш хут «Ылттăн çăлтăр» медальпе наградăланă. Совет Союзĕн виçĕ хут Геройĕн Г. К. Жуковăн бронзăран тунă кĕлеткине пирĕн Тăван çĕршывăн столицинче—Мускавра лартаççĕ, Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕсен К. К. Рокоссовскин тата И. С. Коневăн бронзăран тунă кĕлеткисене вĕсем çуралса ӳснĕ вырăнсенче лартаççĕ.

Георгий Константинович Жуковăн, Константин Константинович Рокоссовскин тата Иван Степанович Коневăн ячĕсене совет çыннисем пурте лайăх пĕлеççĕ, вĕсене сталинла шкулта вĕренсе çитĕннĕ чи чаплă полководецсем, аслă Сталинăн вĕренекенĕсем, унăн генийллĕ стратегиллĕ шухăшĕсене пултаруллăн пурнăçа кĕртсе пыракансем тесе шутлаççĕ. Хальхи вăрçăн историллĕ çапăçăвĕсем—вăрçа тепĕр майлă татăклăн çавăрса янă çапăçусем, гитлерла Германин тĕп вăйĕсене çĕмĕрсе, пĕтерсе тăкнă çапăçусем—çавсен ячĕпе çыхăнса тăраççĕ.

Мускава паттăррăн хӳтĕленĕ çĕрте, Мускав патĕнче нимĕç çарĕсене аслă Сталин ертсе пынипе аркатса тăкас тĕлĕшпе Жуков Маршал тунă паха ĕççене совет халăхĕ нихçан та манмĕ. Шăп çавăнта, пирĕн столица патне пымалли вырăнсенче, вăрмансемпе ращасенче тата Мускав патĕнчи хирсенче Германи çарне «никам та çĕнтерейрес çук» текен халапа аркатса тăкса таптанă, пуçарулăха тăшман аллинчен тытса илнĕ. Хĕрлĕ Çар гитлеровецсен мĕнпур планĕсене пăрахăçа кăларнă, активлă хӳтĕлесе тăнă çĕртен тăшман çарĕсене хирĕç ăнăçлăн наступлени пуçласа янă, çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен вĕсене нимĕнпе саплайми çухатусем тӳстернĕ. Ленинграда паттăррăн хӳтĕлени, пирĕнпе туслă пурăнакан Польшăн столицине Варшава хулине ирĕке кăларни те Жуков ячĕпе çыхăнса тăраççĕ. Жуков Маршал командир пулса ертсе пынипе пирĕн çарсем Берлин хулине вăркăнса кĕрсе кайрĕç, çав фашистла шăтăк çине çĕнтерӳ ялавĕ çĕклесе лартрĕç.

Рокоссовский Маршал Сталинград геройĕ пулса—пĕтĕм вăрçа тепĕр майлă çавăрса янă аслăран та аслă çапăçăвăн, Германи çарĕ пĕтсе пырассин пуçламăшĕ пулса тăракан çапăçăвăн геройĕ пулса тухрĕ. Вăл тата Белоруссире Хĕрлĕ Çарăн наступленине ертсе пычĕ. Вăл ертсе пынипе Совет çарĕсем нимĕççене Данцигран тата Штеттинран хăваласа кăларчĕç.

Конев Маршалăн ячĕ Совет Украинине ирĕке кăларнипе, Днепр шывĕн сылтăм енче, уйрăм илсе кăтартсан—Корсунь-Шевченковский районĕнче, нимĕççене аркатмалла пыра-пыра çапнипе çыхăнса тăрать. Çак юлашки районра Хĕрлĕ Çар нимĕççем валли çĕнĕ Сталинград туса хучĕ. Конев Маршалăн çарĕсем Жуков Маршалăн çарĕсемпе пĕрле Берлин хулине вăркăнса кĕрсе кайрĕç, унтан Верховнăй Главнокомандованин çĕнĕ заданине пурнăçа кĕртсе пырса, Прага хулинелле вăркăнчĕç, пирĕнпе союзлă Чехословакин столицине нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларчĕç.

Эпир кунта Жуков, Рокоссовский тата Конев Маршалсем командир пулса ертсе пынипе туса ирттернĕ чи пысăк операцисене çеç асăнтăмăр. Çав операцисем историе сталинлă çар искусствин, тăшмана çĕнтерме вĕрентекен сталинла наукăн питĕ чаплă тĕслĕхĕсем пулса кĕреççĕ. Совет Союзĕн виçĕ хут Геройне Жуков Маршала, Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕсене Рокоссовскипе Конев Маршалсене пирĕн халăх Сталин юлташ вĕрентсе хатĕрленĕ совет полководецĕсен чаплă представителĕсем тесе шутласа хисеплет. Çав полководецсем «Германи фашизмне хирĕç пынă Отечественнăй аслă вăрçăн йышлă фрончĕсенче пирĕн çарсене çапăçăва илсе кĕчĕç, пирĕн çĕршыва кураймин захватчиксенчен тасатрĕç, пире гитлерла Германие çĕнтересси патне илсе пычĕç» (В. М. Молотов).

Отечественнăй вăрçăн полководецĕсемпе геройĕсене мухтаса, пирĕн халăх пĕтĕм кĕрешĕве ертсе пынă тата ертсе пыракан çын çинчен, пире историре халиччен пулман Çĕнтерӳ патне илсе çитернĕ çын çинчен, хăйĕн полководецла генийĕпе çар наукине çав тери çӳле хăпартса янă çын çинчен—аслă Сталин çинчен çĕнĕрен те çĕнĕрен шухăшлать, ăна юратать, тав тăвать. Совет полководецĕсен вăйĕ — вĕсем сталинла полководецсем пулнинче. Сталин ертсе пыни, вăл малашнехине курса тăни, унăн стратегиллĕ шухăшĕ çав çарсен çĕнтерӳллĕ çулне çăлтăр пек çутатса тăчĕç, вăрçăра чи лайăх йышши яланхи çар туса хучĕç, хамăр халăхăн социализмлă аслă çĕнтерĕвĕсене хӳтĕлесе тăма тата Совет Союзĕн государство интересĕсене сыхласа тăма пултаракан чи лайăх йышши яланхи çар туса хучĕç.

Хастарлă та çĕнтерӳллĕ çара—пирĕн паттăр халăхăн паттăр çарне ĕмĕр-ĕмĕр мухтав, унăн талантлă полководецĕсене мухтав, Верховнăй Главнокомандующине, Çĕнтерӳ Маршалне, аслă çынна тата юратнă çулпуçа Иосиф Виссарионович Сталина мухтав.

(«Правда» хаçатăн июнĕн 2-мĕшĕнчи умстатьи).

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн XIV-мĕш пленумĕ

1945 çулхи июнĕн 2-мĕшĕнче ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн XIV-мĕш пленумĕ пулса иртнĕ. Пленумра организациллĕ ыйтусене сӳтсе явнă. Пленум **М. М. Романова** юлташа, вăл ВКП(б) Обкомĕн аппаратне ĕçлеме куçнă май, ВКП(б) хула комитечĕн 2-мĕш секретарĕнчен тата бюро членĕсен составĕнчен кăларнă.

С. М. Ислюков юлташа ВКП(б) хула комитечĕн 3-мĕш секретарĕнчен хăтарса, ВКП(б) хула комитечĕн 2-мĕш секретарĕ пулма çирĕплетнĕ.

М. К. Ардаматский юлташа ВКП(б) хула комитечĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕнчен хăтарса, ВКП(б) хула комитечĕн 3-мĕш секретарĕ пулма çирĕплетнĕ.

ВКП(б) хула комитечĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулма **П. П. Кулагин** юлташа çирĕплетсе, ăна ВКП(б) хула комитечĕн пленум тата бюро членĕсен составне кĕртнĕ.

Пленум ВКП(б) хула комитечĕн бюро членĕсен составĕнчен **М. Л. Брикер** юлташа кăларнă, ВКП(б) хула комитечĕн пленум тата бюро членĕсен составне пĕр заводри ВКП(б) Центральный Комитечĕн парторгне **В. И. Борох** юлташа кĕртнĕ.

Пленум **Щербаков** юлташа, вăл урăх хулана куçса кайнă май, ВКП(б) хула комитечĕн бюро членĕсен составĕнчен кăларнă, ВКП(б) хула комитечĕн Оргинструкторски пайăн заведующийĕ пулса ĕçлекен **В. П. Шаронова** юлташа ВКП(б) хула комитечĕн бюро членĕсен составне кĕртнĕ.

Майăн 24-мĕшĕнче СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн Пĕрремĕш Заместителĕ Н. М. Шверник юлташ Совет Союзĕн Маршалĕсене Г. К. Жукова, И. С. Конева, К. К. Рокоссовские, Р. Я. Малиновские тата Ф. И. Толбухина «Çĕнтерӳ» орденĕсем панă. Июнĕн 1-мĕшĕнче СССР Верховный Совет Президиумĕ Совет Союзĕн Геройĕсене Г. К. Жукова виççĕмĕш хут, К. К. Рокоссовскипе И. С. Конева иккĕмĕш хут «Ылттăн Çăлтăр» медальпе наградăланă.

Ӳкерчĕк çинче (сулахайран сылтăмалла): **А. Ф. Горкин, Н. М. Шверник,** Совет Союзĕн Маршалĕсем—Совет Союзĕн Геройĕ **Г. К. Жуков,** Совет Союзĕн Геройĕ **И. С. Конев, Р. Я. Малиновский, Ф. И. Толбухин** тата Совет Союзĕн Геройĕ **К. К. Рокоссовский.**

Г. ШИРОКОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Совет Союзĕн Геройне Совет Союзĕн Маршалне Георгий Константинович Жукова виççĕмĕш „Ылттăн Çăлтăр" медальпе наградăласси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç Берлин районĕнче пынă кĕрешĕвĕн фронтĕнче пысăк çапăçусене ертсе пырас тĕлĕшпе Верховнăй Главнокомандовани панă боевой заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн тата çав çапăçусенче татăклă çитĕнӳсем тунăшăн Совет Союзĕн Геройне Совет Союзĕн Маршалне Георгий Константинович Жукова виççĕмĕш хут «Ылттăн Çăлтăр» медальпе наградăлас, унăн кĕлеткине бронзăран туса, ăна Мускав хулинче постамент çине лартас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **М. КАЛИНИН.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль. 1945 çулхи июнĕн 1-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Совет Союзĕн Геройне Совет Союзĕн Маршалне Константин Константинович Рокоссовские иккĕмĕш „Ылттăн çăлтăр" медальпе наградăласси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç Померанипе Мекленбург районĕнче пынă кĕрешĕвĕн фронтĕнче çапăçусене ертсе пырас тĕлĕшпе Верховнăй Главнокомандовани панă боевой заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн тата çав çапăçусенче çитĕнӳсем тунăшăн Совет Союзĕн Геройне Совет Союзĕн Маршалне Константин Константинович Рокоссовские иккĕмĕш хут «Ылттăн Çăлтăр» медальпе наградăлас, унăн кĕлеткине бронзăран туса, ăна вăл çуралнă вырăнта постамент çине лартас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **М. КАЛИНИН.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль. 1945 çулхи июнĕн 1-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Совет Союзĕн Геройне Совет Союзĕн Маршалне Иван Степанович Конева иккĕмĕш „Ылттăн çăлтăр" медальпе наградăласси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç Прага районĕпе Берлинран кăнтăртарахри районра пынă кĕрешĕвĕн фронтĕнче çапăçусене ертсе пырас тĕлĕшпе Верховнăй Главнокомандовани панă боевой заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн тата çав çапăçусенче çитĕнӳсем тунăшăн Совет Союзĕн Геройне Совет Союзĕн Маршалне Иван Степанович Конева иккĕмĕш хут «Ылттăн Çăлтăр» медальпе наградăлас, унăн кĕлеткине бронзăран туса, ăна вăл çуралнă вырăнта постамент çине лартас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **М. КАЛИНИН.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль. 1945 çулхи июнĕн 1-мĕшĕ.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин патĕнче США Президенчĕн представителĕ Г. Гопкинс господин ячĕпе пулса иртнĕ апатлану

Июнĕн 1-мĕшĕнче Кремльте СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин патĕнче США Президенчĕн представителĕ Г. Гопкинс господин ячĕпе апатлану пулса иртнĕ.

Апатланура çаксем пулнă: Г. Гопкинс господин арăмĕпе пĕрле, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи Посолĕ В. А. Гарриман господин хăйĕн хĕрĕпе пĕрле, Великобританин Совет Союзĕнчи Посолĕ А. К. Керр господин, США Посольствин Советникĕ Д. Кеннан господин, США-н Çар Миссийĕн Начальникĕ Д. Дин генерал-майор, США-н Государство Секретарĕн Помощникĕ Ч. Болен господин, С. Сполдинг генерал-майор, бригада генералĕ Ф. Робертс, контр-адмирал Майплз.

Совет Союзĕ енчен апатланура çаксем пулнă: В. М. Молотов, А. И. Микоян, Л. П. Берия, Г. М. Маленков, Л. М. Каганович, Н. М. Шверник, Н. А. Вознесенский, Н. А. Булганин, А. Н. Косыгин, флот адмиралĕ Н. Г. Кузнецов, В. Н. Меркулов, М. М. Литвинов, И. М. Майский арăмĕпе пĕрле, авиаци Маршалĕ Ф. Я. Фалалеев, авиаци Маршалĕ Ф. А. Астахов, В. В. Кузнецов, Г. М. Попов, В. А. Сергеев, генерал-полковник Ф. И. Голиков тата ыттисем те.

Апатлану туслăн та ăшшăн иртнĕ.

Виççĕмĕш Военнăй Заемăн пĕрремĕш выльявĕ

Июнĕн 3-мĕшĕпе 4-мĕшĕнче Ленинградра Виççĕмĕш Военнăй Заемăн пĕрремĕш выльявĕ пулса иртет. Выльявра мĕн пурĕ 2.323.750 выигрыш пулать, вĕсем 621.378.000 тенкĕлĕх пулаççĕ. Вăл шутран 270 выигрыш 50.000-шер тенкĕлĕххисем, 540 выигрыш 25.000-шер тенкĕлĕххисем, 1.350 выигрыш 10.000-шер тенкĕлĕххисем, 2.700 выигрыш 5.000-шер тенкĕлĕххисем, 27.000 выигрыш 1.000-шер тенкĕлĕххисем пулаççĕ.

Ку выльявра, вăтамăн илсен, кашни 115 облигаци çине пĕр выигрыш тухмалла. (ТАСС).

ВИÇÇĔМĔШ ПЯТИЛЕТКА ЗАЕМĔН ВЫЛЯВĔ

Майăн 30-мĕшĕнче Виççĕмĕш Пятилетка Заемĕн (тăваттăмĕш çулхи кăларăмăн) 14-мĕш выльявĕ пулса иртнĕ. Выльявра 102.502.000 тенкĕлĕх 644.000 выигрыш выляннă. (ТАСС).

Чăваш республикинчи колхозсемпе совхозсенче ялхуçалăх культурисене пăхса ӳстересси çинчен

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановлени

Юлашки çулсенче нумай колхозсенче, уйрăмах Кувакино, Пăрачкав, Первомайски, Чкаловски, Шăмăршă районĕсенче, уйхирте çумкурăксем нумайланса кайрĕç. Уйхирсен чылай пайне çуркунне сухалани, çуркунне кая юлса килни, май уйăхĕнче çанталăк сивĕ пулни, çав вăхăтрах çăмăр чылаях çуни кăçал пур çĕрте те пекех çумкурăкĕсене ӳсме лайăх условисем туса парать, анчах çав вăхăтрах нумай районсенче çумкурăксемпе кĕрешессине, калчасене пăхса усрассине тивĕçлипе организацилемен.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ районсенчи парти организацийĕсене, совет тата çĕрĕç органĕсене çакăн çине çаврăнса пăхма хушать: техникăллă культурăсемпе пропашной культурăсене, тĕштырăсене тата вăрлăхлăх акнă нумай çул ӳсекен курăксене вăхăтра, тĕплĕн пăхса ӳстерни кăçал уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Районсенчи партипе совет тата çĕрĕç органĕсем колхозсемпе МТС-сен тата совхозсен мĕнпур вăйĕпе майĕсене уйхирсене çумкурăкĕсенчен вăхăтра тата тĕплĕн тасатас тата ретсем хушшинче ĕçлес ĕçе мобилизацилесен, кăçалхи çурхи çанталăк тата çураки вăхăтĕнче туса ирттернĕ пысăк ĕçсем пур çĕрте те вăйлă тырпул туса илме лайăх условисем туса параççĕ. Вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçĕн ăнăçлăхĕ пуринчен малтан, партипе совет тата çĕрĕç органĕсем çумкурăкĕсене хирĕç кĕрешме ĕçе юрăхлă мĕнпур колхозниксемпе совхозсен рабочийĕсене явăçтарма пултарнинчен, техникăллă культурăсене, пропашной культурăсене, тĕштырăсене тата вăрлăхлăх акнă нумай çул ӳсекен курăксене ирттерех çумлассине, ретсем хушшинчи ĕçе ирттерех туса ирттерессине организацилеме пĕлнинчен килет.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăнать:

1. Çумкурăкĕсене хирĕç кĕрешес ĕçе, техникăллă культурăсемпе пропашной культурăсен, тĕштырăсен, вăрлăхлăх акнă нумай çул ӳсекен курăксен хирĕсенче çум çумлассине тата ретсем хушшинче ĕçлессине парти, совет тата çĕрĕç органĕсен, колхозсен, МТС-семпе совхозсен çывăх вăхăтри чи пысăк задачи пулса тăрать, тесе шутлас.

ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсене мĕнпур колхозсемпе совхозсенче ялхуçалăх культурисене пăхса ӳстерес ĕçе халех вăйлатма, çумкурăкĕсене хирĕç кĕрешес ĕçе колхозсемпе совхозсенчи мĕнпур ĕçлеме пултаракан çынсене тата подростоксене явăçтармалла тума хушас.

2. Тырпулсене ал вĕççĕн çумламалли тата ретсем хушшинче ĕçлемелли плана районсем тăрăх палăртса çирĕплетес.

Районсенчи парти, совет тата çĕрĕç органĕсене колхозсенче техникăллă культурăсемпе пропашной культурăсене, тĕштырăсене тата вăрлăхлăх акнă нумай çул ӳсекен курăксене алă вĕççĕн çумламалли тата ретсем хушшинче ĕçлемелли плана палăртса хума, вăл планра çав ĕççене тумалли сроксене кăтартса пама хушас.

Ялхуçалăх культурисене пăхса ӳстермелли заданисене бригадăсемпе звеносем патне, бригадăсемпе звеносенче вара — ĕçлеме пултаракан кашни колхозникпе совхоз рабочийĕ патне çитермелле.

3. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ парти, совет тата çĕрĕç органĕсене ретсем хушшинче ĕçлессине тата тырпулсене çумлассине çителĕксĕр хаклани тырпул тухăçне чакарма пултарни çинчен асăрхаттарать. Кăçал çăмăр нумай çунипе тата уйхирсенче çумкурăксем нумай пулнипе ку хăрушлăх татах та пысăкланать. Çакна шута илсе, ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ парти райкомĕсене, райисполкомсене 1945 çулта ретсем хушшине сахалтан та 2—3 хут кăпкалатса тухма, пур культурăсене те 2—3 хут çумламалла тума хушать.

4. Кăçал çурхи культурăсен чылай пысăк пайне çуркунне сухаланă тăпра çине акнине, кĕрхи тырăсене нумай колхозсемпе совхозсенче тин çеç сухаланă тăпра çине акнине шута илсе тата калчасене ирттерех çумлани тĕштырăн, курăк вăрлăхĕн тухăçлăхне чылай ӳстернине, калчасене пăхса усрама кирлĕ ĕç хисепне чакарнине асра тытса, ВКП(б) райкомĕсене, райисполкомсене колхозсемпе совхозсенче кĕрхипе çурхи тырăсене, вăрлăхлăх акнă нумай çул ӳсекен курăксене ирттерех çумлассине организацилеме хушас.

5. Ялхуçалăх культурисене кирлĕ пек пăхса усрамалла тăвас тесе, парти, совет тата çĕрĕç органĕсене çаксене тума хушас:

а) колхозсемпе совхозсенче ретсем хушшинчи тăпрана кăпкалатма чĕрĕ туртăм вăйĕпе ялхуçалăх инвентарĕсене, суракинче тата çĕртме тунă çĕрте усă курманскерсене, кирлĕ таранах уйăрмалла;

б) ретсем хушшинчи тăпрана кăпкалатма, калчасене çумлама кирлĕ инвентарьсене çывăх вăхăтрах юсаса пĕтермелле;

в) колхозсен уйхир бригадисемпе звенисенче ĕçлекен колхозниксене тĕштырăпа техника культурисем акнă участоксене çу каçиччен пăхса усрамашкăн уйăрса памалла. Ретсем хушшинчи тăпрана кăпкалатмалли, çумламалли вăхăтсене кăтартса памалла, ĕç пахалăхне уйхир бригадисен бригадирĕсем тĕрĕслесе пымалла;

г) колхозсенче ялхуçалăх культурисене пăхса çитĕнтерекен колхозниксен ĕç вăхăчĕпе туллин усă курмалла тăвас тесе, вĕсене валли уйра столовăйсем уçмалла;

д) колхозсенче уйри ĕçсем вăхăтĕнче ача яслисемпе сачĕсем тата площадкисем уçмалла. Ку ĕçе учительсене, медицина работникĕсене тата опытлă ватă колхозницăсене хутшăнтармалла.

Колхозра ача яслисемпе сачĕсем тата площадкăсем уçма май килмесен, унта вара ачасене группăсене пĕрлештерсе уйрăм çынсем патĕнче пăхса усрамалла. Ку ĕçе тумашкăн опытлă ватăрах колхозницăсене хушмалла, вĕсене колхоз шучĕпе ĕçкунĕсем тӳлемелле.

6. Юлашки çулсем хушшинче предприятисемпе учрежденисен подсобнăй хуçалăхĕсенче ялхуçалăх культурисем, уйрăмах çĕрулмипе пахча-çимĕç акса тăвасси çаралнă пирки, ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ промышленность предприятийĕсемпе учрежденисен руководителĕсене, ВКП(б) хула комитечĕсемпе райкомĕсене подсобнăй хуçалăхсенче çĕрулмин, пахча-çимĕçĕн, тĕштырă культурисен речĕсем хушшинчи тăпрана вăхăтра кăпкалатма тата тĕплĕн çумлама хушать. Ку тĕлĕшпе подсобнăй хуçалăхсене вăхăтра ĕç вăйĕ парса пулăшмалла.

7. Кăçалхи çанталăк условийĕсем ялхуçалăхне сиенлекен хурт-кăпшанкăсем йышлăн ĕрчеме лайăх пулнине шута илсе, парти, совет тата çĕрĕç органĕсене ялхуçалăх культурисене сиенлекен хурт-кăпшанкăсене хирĕç кĕрешессине организацилеме, колхозсемпе совхозсене наркăмăшпа химикатсем вăхăтра кирлĕ таранах кӳрсе пыма хушас.

8. «Чăваш Коммуни» тата «Красная Чувашия» хаçатсен редакцийĕсене колхозсенче, совхозсенче тата подсобнăй хуçалăхсенче ретсем хушшинче ĕçлесси тата калчасене çумласа тасатасси мĕнле пыни çинчен, ялхуçалăх культурисене пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе малта пыракан колхозсемпе совхозсен опычĕсем çинчен хаçатра анлăн çутатса пыма хушас.

ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ **И. ЧАРЫКОВ.**

Ĕçсыннин депутачĕсен Çĕрпӳ райсоветĕн исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ тăратнă тăрăх, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ăнăçлă тултарнăшăн тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстернĕшĕн малта пыракан çак колхозниксене республикăри **ХИСЕП ХĂМИ** çине кĕртнĕ:

16. **«Нива» колхозăн конюхĕ С. Н. Никитин** юлташ лашасене лайăх пăхать. Хăй çумне çирĕплетнĕ 3 кĕсререн виçĕ тиха илнĕ, вĕсене лайăх ситĕнтерет. Кĕсресене пурне те чуптарса хăварнă.

17. **«Новая жизнь» колхозăн конюхĕ Старублева** арăмлă кĕсресене лайăх пăхать. Хăй çумне çирĕплетнĕ 7 кĕсререн майăн 20-мĕшĕ тĕлне 5 тиха илнĕ.

18. **«Новая жизнь» колхозăн конюхĕ Донатова** лашасене лайăх пăхать. Майăн 20-мĕшĕ тĕлне хăй çумне çирĕплетнĕ 6 кĕсререн 4 тиха илнĕ. Кĕсресене пурне те чуптарса хăварнă.

19. **«Новая жизнь» колхозăн дояркки Александра Романова** хăй çумне çирĕплетнĕ 7 ĕнерен 7 пăру илнĕ.

20. **Калинин ячĕпе тăракан колхозри сурăхсене пăхакан Е. Иванова** 100 сурăхран 120 пăтек илсе пурне те сыхласа хăварнă.

21. **Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри доярка З. Г. Чунаева** юлташ, хăй çумне çирĕплетнĕ сăвакан 8 ĕнерен 5 уйăх хушшинче кашнинченех 752 литр сĕт суса илнĕ.

22. **Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри доярка Т. Ф. Драгунина** хăй çумне çирĕплетнĕ сăвакан 9 ĕнерен кăçал 5 уйăх хушшинче кашнинченех вăтамран 665 литр сĕт илнĕ.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ 1945 ÇУЛХИ ИЮНĔН 1-МĔШĔ ТĔЛНЕ ÇУРАКИ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Пĕтĕмпе акнă	Çав шутран: Тĕштырпа пăрçа йышши тырăсем	Çĕрулми	Пахча-çимĕç	Кантăр	Йĕтĕн	Махорка	Ферма çумĕнчи участока лартнă
Муркаш	102.6	106.0	94.7	75,0	80.8	—	—	53.6
Шупашкар	102.2	105.0	98.8	47,0	83,3	—	—	59,5
Сĕнтĕр	101.9	104.9	101,8	51,0	80.6	—	—	28,7
Вăрнар	101.6	108,9	100.5	43,3	90,0	—	82,0	53,4
Элĕк	101.5	106.6	92.5	85,0	74,2	—	—	29,1
Шăхасан	101.1	102,2	100.4	89,2	80,8	—	—	64,0
Куславкка	100.9	102,1	95.3	57.6	41.2	—	—	55,4
Сĕнтĕрвăрри	100.9	104.1	99.6	51.1	52.0	—	—	50,4
Етĕрне	100.8	103.9	100.3	76,0	91.4	—	69,2	65,2
Красноармейски	100.3	102.4	100.4	82,0	92.2	—	—	89.1
Чкаловски	100.2	103.2	65.0	47.7	58.2	—	—	72,2
Советски	100.1	103.0	96.5	63.7	90.1	—	—	57.8
Вăрмар	100.1	100.9	100,2	88.2	87,5	—	—	121,8
Ишлей	100.0	102.2	101.7	26.6	59.4	—	—	102.1
Октябрьски	100.0	103.3	93.4	55.4	54.1	—	—	48,2
Çĕрпӳ	100.0	101.1	102.1	55,3	74,0	—	—	95.7
Елчĕк	100.0	100.0	98.2	60,0	86,8	—	—	44,0
Чурачăк	98.7	100.0	102.7	57.2	86.2	10,8	—	113,7
Калинино	98.3	117,8	88,0	82,6	91,1	—	—	61,3
Шăмăршă	98.1	103,0	50,0	5.7	36.9	—	—	81,0
Канаш	95.4	103,1	67,6	52.8	51,3	—	—	24.4
Тăвай	94.4	101.3	65,0	50.6	30.7	—	—	60,0
Комсомольски	92.1	93.4	53.1	40.6	42.0	—	—	73.0
Хĕрлĕ Чутай	86.2	96.1	49.0	52.5	38,2	—	16,1	29,2
Йĕпреç	85.4	100,1	27,2	31.0	42.0	9.4	32.0	47.6
Кувакино	81.7	89.9	28.6	3,7	—	20.3	42,8	42.5
Первомайски	80.7	87,7	41.8	38.5	33,6	—	29.0	43.0
Улатăр	76.5	93.5	9.3	6.5	—	42,2	25,8	39.4
Пăрачкав	76.1	74.2	45.8	10,0	—	15.4	34,4	51,8
Çĕмĕрле	73.7	97.6	43.6	13,0	59.0	—	56,3	54.0

Ишлей районĕнчи колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарнă

ИШЛЕЙ, июнĕн 2-мĕшĕ. (ТЕЛЕГРАФПА). Районри колхозсем июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1945 çулхи государственнăй плана лашасем енĕпе 101 процент, мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 102 процент, сыснасем енĕпе 143 процент тултарнă.

ВКП(б) Ишлей райкомĕн секретарĕ И. ПИДУГАНОВ.

1000 гектар ытла çĕртме тунă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июнĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Районри нумай колхозсем çĕртме тума тытăнчĕç. 28 колхозран пĕлтернĕ тăрăх, паянхи кун тĕлне пурĕ 1000 гектар ытла çĕртме тунă.

«Правда» колхозра МТС тракторĕсем 38 гектар çĕртме сухаланă. Çак колхозра халĕ хире тислĕк кăлараççĕ. Кунта 32 лашапа ĕçлесе пилĕк кун хушшинче 30 гектар çине 4700 лав тислĕк кăларнă. Е. Романова, К. Павлова колхозницăсем кашни кунах 16—17-шер лав тислĕк турттараççĕ.

«Победа» колхозра (председателĕ Трошкина) çуракине вĕçленĕ хыççăнах хире тислĕк кăларма тата çĕртме сухи тума тытăннă. Уя 2000 лав ытла тислĕк кăларнă. Çак колхоз район центрĕнчи учрежденисен картишĕсенчи тислĕке те пухса уя турттарать. «Чăвай» колхоз та 60 гектар çĕртме тунă. Хире тислĕк кăларас тата çĕртме тăвас ĕç ытти колхозсенче те ăнăçлă пырать.

С. ШАДИН.

Чăваш писателĕсемпе искусство работникĕсен пухăвĕ

Июнĕн 1-мĕшĕнче Шупашкарта, Пионерсен Суртĕнче, чăваш писателĕсемпе искусство работникĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура СССР Совет писателĕсен Союзĕн 10-мĕш пленумĕн ĕçĕсем çинчен çав пленумра пулнă Чăваш совет писателĕсен правленин членĕ Аркадий Эсхель, поэт пысăк доклад туса панă.

Хайĕн докладĕнче А. Эсхель пухури сынсене пленумăн ĕçĕсемпе тата чăваш писателĕсемпе поэчĕсен Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнчи творчествипе тĕплĕн паллаштарчĕ.

— Пуринчен ытла,—терĕ докладчик, —вăрçă вăхăтĕнче пирĕн фронтра пулнă писательсем—М. Данилов-Чалдун, Л. Агаков, П. Хузангай, Я. Ухсай, Уйăп Мишши, А. Алга ăнăçлă ĕçлерĕç. Тылри писательсенчен ку вăхăтра халăх поэчĕсем—Н. И. Шелеби, С. В. Эльгер, поэт С. Шавлы, И. Тукташ, И. Малгай т. ыт. те сахал мар пахa произведенисем пачĕç.

Докладчик уйрăмăнах чăваш писателĕсен малашне чăваш халăхĕпе аслă вырăс халăхĕ ĕмĕртенпех туслă пулнине кăтартса паракан, фронтри тата тылри геройсене сăнласа паракан аслă произведенисем ытларах çырма кирлине палăртрĕ.

Доклад хыççăн С. В. Эльгер, Л. Агаков, С. Шавлы, Ф. Уяр, И. Тукташ, çамрăк писательсем—В. Урдашпа А. Ежов т. ыт. тухса калаçрĕç. СССР Совет писателĕсен Союзĕн 10-мĕш пленумĕн решенийĕсене пĕтĕмĕшпех ырласа, вĕсем чăваш писателĕсен малашнехи творчествăлла ĕçĕсене тата ытларах аталантарас тĕлĕшпе пахa сĕнӳсем пачĕç.

Пухура ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пропагандăпа агитаци енĕпе ĕçлекен секретарĕ А. С. Вишняков пулчĕ.

Шкулсенчи экзаменсем

Çитменлĕхсем те палăраççĕ

ЙĔПРЕÇ. Экзаменсемпе пĕлӳ тĕрĕслевĕсем районри пур шкулсенче те пулса пыраççĕ. Пĕр сăлтавсăр шкула пымасăр юлнă ачасем çук. Пĕлӳ тĕрĕслевне уйрăмăнах Йĕпреçри вăтам шкул, Хумпус, Пăтăръелĕнчи, Чăваш Тимешĕнчи тата Чăрăшкассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулсем лайăх хатĕрленсе кĕтсе илчĕç. Йĕпреçри вăтам шкулта 10-мĕш класра 24 вĕренекенрен 6 вĕренекен ку таранччен панă экзаменсенче пур предметсемпе те «пиллĕк» илнĕ. Вырăс чĕлхипе çырнă сочиненисем тăрăх 16 вĕренекен «пиллĕк» тата «тăваттă», ыттисем «виççĕ» илнĕ. Л. Пегиров, Е. Степанов, Андреева вĕренекенсен сочиненийĕсем питĕ пысăк пулни те, вĕсем пĕр йăнăш та туман. Вĕсем ытти предметсемпе те «пиллĕк» илеççĕ.

Чăваш Тимешĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухма 22 ача экзамен параççĕ. Алгебрăпа арифметика тăрăх экзаменра пĕр ача «пиллĕк», 4 вĕренекен «тăваттă», 17 вĕренекен «виççĕ» илнĕ. Кунта экзамен парайман е «виççĕрен» кая илекен пĕр ача та пулман. Савнашкалах экзаменсемпе пĕлӳ тĕрĕслевĕсем Пысăк Упакассинчи, Эпесри çичĕ çул вĕренмелли шкулсенче те ăнăçлăн иртсе пыраççĕ. Ку шкулсенче вĕренекенсем ытларах «пиллĕк» тата «тăваттă» паллăсем илеççĕ. Дисциплина лайăх. Кунта вĕренекенсене кашни кунах вĕри апат çитереççĕ. Экзаменсене хатĕрленме пур условисене те туса панă.

Экзаменсемпе пĕлӳ тĕрĕслевĕсем хăшпĕр шкулсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçĕ кирлĕ вырăнта тăманнине кăтартса пачĕç. Климовăри вăтам шкулта хăшпĕр предметсемпе вĕренӳ программине тултарман. Уйрăмăнах вырăс чĕлхипе истори предмечĕсене начар вĕрентнĕ. Çавна пула ку шкулта 10-мĕш класра вĕренекенсене пурне те экзамен партармасăр тепĕр çула хăвармалла тунă.

Хăшпĕр шкулсенчи учительсем паллăсене тивĕççĕр ӳстерсе лартаççĕ. Шуркассинчи тăватă çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухакансенчен вырăс чĕлхипе нумай ачасем «иккĕ» е «пĕрре» илнĕ. Шкул заведующийĕ А. Андреева юлташ вĕренекенсене пурне те «тăваттă» е «виççĕ» лартса тухнă. Кун пек тĕслĕхсем пулмалла мар.

П. КУРАКОВ.

Экзамен парайман ачасем çук

КУСЛАВККА, июнĕн 2-мĕшĕ (Телефонпа). Шкулсенчи экзаменсемпе пĕлӳ тĕрĕслевĕсем лайăх иртсе пыраççĕ. Куславккари вăтам шкулта тăваттămĕш класра вырăс чĕлхипе çыру ĕçĕсем тăрăх тата çамах вĕççĕн ыйтнă чухне пур вĕренекенсем те «пиллĕк» тата «тăваттă» илчĕç. Ытти предметсемпе те нумай вĕренекенсем «виççĕрен» кая илмеççĕ. Ку класра Золотова учительница ачасене лайăх вĕрентни курăнать.

10-мĕш класра майăн 29-мĕшĕнче алгебрăпа экзамен пулчĕ. 27 вĕренекенрен 7 вĕренекен «пиллĕк» тата «тăваттă» илчĕç. Ку класра Приченков тата Аверина вĕренекенсем пур предметсемпе те «пиллĕк» илсе пыраççĕ.

М. ОГОРОДНИКОВ.

СССР-ти XIV-мĕш ШАХМĂТ ЧЕМПИОНАЧĔ

Июнĕн 1-мĕшĕнче Союзсен Сурчĕн Октябрьски залĕнче СССР-ти XIV-мĕш шахмăт турнирĕ пуçланнă. Турнир пыракан залра халăх туллиех. Совет Союзĕн чемпионĕ Ботвинник Флорпа вылянни пурне те интереслентернĕ. Вĕсем ферзь гамбичĕпе пуçланакан партие вылянă. Флор хăйне шанчăксăр мелпе хӳтĕленĕ. Унăн ладьи выляйман. Çакă Ботвинника центрта пешкăсем ытларах хăварма, вара Флора талккăшĕпех атакăлама май панă. Флорăн хăйĕн слонне иккĕ пешкăшăн памa тивнĕ. Анчах çакă ăна пулăшайман. Ботвинник пур хăрушлăхсене те пĕр хăрамасăр сирсе янă та 37 хут çӳресен Флора парăнтарнă. Бондаревский гроссмейстерпа Смыслов гроссмейстер хăйсен партине выляса пĕтереймен. Чеховер мастер Лилиенталь гроссмейстера çĕнтернĕ.

Котов гроссмейстерпа Латви чемпионĕн Кобленцăн партийĕ никам çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ.

Болеславский мастерпа Алаторцев мастерăн партийĕ те никам çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ.

Толуш мастер Гольберга çĕнтернĕ.

Рагозин мастер 31 хут çӳресен Рудаковский мастера парăннă.

Киев шахматисчĕ Ратнер тата спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ Романовский хăйсен партине выляса пĕтереймен.

Клн мастерпа Константинопольский мастер та хăйсен партине выляса пĕтереймен.

Хура тинĕсре пассажирсене турттарса çӳрекен пăрахутсем çӳреме пуçланă

Хура тинĕсре 4 çул хушши çӳремен хыççăн халь пассажирсене турттарса çӳрекен пăрахутсем çӳреме пуçланă. Одессăран Херсона кайма пĕрремĕш теплоход «Порд» тухнă. Июнь пуçламăшĕнче пассажирсене турттарса çӳрекен пăрахутсем Крымпа Кавказ хушшинче çӳреме пуçлаççĕ. Çав пăрахутсем Севастополе, Новороссийска, Сочие, Сухумие, Потие тата Батумие кĕрсе тухаççĕ. (ТАСС).

Франци Сирипе тата Ливанпа хирĕçни пирки

Франци Сирипе тата Ливанпа хирĕçме пуçланине пула унта хĕçпăшаллă тытăçусем пуçланса кайнă. Çавăн пирки Совет правительстви Франци правительствине, çавăн пекех тата Великобританин, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Китайăн правительствисене ятарласа заявлени панă. Совет правительстви унта çакна палăртнă: кунта ситнĕ хыпарсем тăрăх, Сирипе Ливан çĕрĕнче вăрçă ĕçĕсем пуçланса кайнă, Францин çав çĕрсенче тăракан çарĕсем Сири тата Ливан çыннисемпе çапăçма тытăннă, вĕсем тупăсемпе тата миномeтсемпе пенĕ, çавăн пекех тата Сири столицине — Дамаск хулине—самолетсем çинчен пенĕ. Хĕçпăшаллă тытăçусем Сирипе Ливан çĕрĕнчи ытти хуласенче те пулса пыраççĕ. Вилнисемпе аманнисен хисепĕ кашни кунах ӳссе пырать. Лару-тăру çакăн пирки тата ытларах йывăрланать: çав асăннă виçĕ государство—Франци, Сири тата Ливан — Пĕрлешнĕ Нацисен членĕсем пулса тăраççĕ, вĕсем Сан-Францискăра пыракан конференцие хутшăнса ĕçлеççĕ.

Совет правительствин заявленийĕнче малалла çакна палăртнă: Сирипе Ливанра пулса пыракан ĕçсем Думбартон-Оксра йышăннă решенисемпе килĕшсе тăмаççĕ, мирпе хăрушсăрлăха сыхласа тăмалли организаци тума Сан-Францискăра пухăннă Пĕрлешнĕ нацисен конференцийĕн тĕллевĕсене хирĕç пыраççĕ. Çавăнпа Совет правительстви çапла шутлать: Сирипе Ливанри вăрçă ĕçĕсене пĕтерсе лартмашкăн тата унти хирĕçĕве мирлĕ йĕркепе майлаштарса ямашкăн васкавлă мерăсем йышăнас пулать.

Çакăн пек сĕнĕве Совет правительстви Францин Вăхăтлăх правительствине, çавăн пекех тата Великобританин, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Китайăн правительствисене панă, мĕншĕн тесен вĕсем вăрçă хыççăнхи мирпе хăрушсăрлăха сыхласа тăмалли организаци тăвас ĕçе пуçарса яракансем пулаççĕ.

СССР Наркоминделĕн Информаци Бюровĕ.

Сирипе Ливанри ĕçсем çинчен

ВАШИНГТОН, майăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). США государство секретарĕн ĕçĕсене туса тăракан Грю пресс-конференцире Пĕрлешӳллĕ Штатсен Парижри посолĕн Кефферин нотине вуласа панă, вăл нотăна Кеффери майăн 28-мĕшĕнче Франци правительствине панă. Çав нотăра Кеффери Франци правительствине Сирипе Ливанра нумаях пулмасть пулса иртнĕ ĕçсем пирки США правительстви питĕ пăшăрханни çинчен каланă. Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви, тенĕ нотăра, Франци правительствине Сирипе Ливан тĕлĕшпе тытса пыракан хăйĕн политикине тепĕр хут тĕплĕн пăхса тухма чĕнет, Франци Левант çĕршывĕсемпе халăхсен çемьин никама пăхăнмасăр пурăнакан членĕсемпе çыхăннă пек çыхăнса тăнине çав çĕршывсем тата пĕтĕм тĕнче лайăх ăнланса илччĕр, тенĕ.

СИРИПЕ ЛИВАНРИ ĔÇСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви Бейрут хулинчен çапла пĕлтерет: Францин Сирипе Ливанри çарĕсен командующийĕ Франци çарĕсене пеме чарăнма приказ панă.

ТОЛЬЯТТИ КАЛАСА ПАНИ

РИМ, майăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Çурçĕр Италирен таврăннă хыççăн Пальмиро Тольятти «Унитон» хаçатăн корреспондентне çапла каланă: эпĕ çĕнĕ правительствăна кĕместĕп пуль. Пирĕн правительствăра лайăх ĕçлеме пултаракан çынсем нумай ĕнтĕ. Çапла вара, эпĕ хамăн мĕн пур вăя партие ертсе пырас ĕçе пама пултарăп. Правительство пуçне Италири социалистсен партийĕн пуçлăхне Ненне лартсассăн тата вăл мана правительствăна кĕме ыйтсассăн, эпĕ унпа килĕшмесĕр юлма пултараймăп, тенĕ.

Малалла Тольятти çакна асăрхаттарса каланă: «Çурçĕр Италире пур партисем те питĕ таччăн та чĕререн пĕрлешсе ĕçлесе тăраççĕ. Халăх ирĕклĕхĕн комитечĕсем халăх йышăннă пĕртен пĕр власть пулса тăраççĕ». Христиан-демократсем, çавăн пекех тата пĕтĕм католик ĕçсыннийĕсем, пупсем те,—тенĕ малалла Тольятти,— çурçĕрте Италири ытти вырăнсенчинчен нумай малта тăракан тĕрĕс çул тытса пыраççĕ. Коммунистсен партийĕн членĕсем хушшинче те пупсем нумай, пирĕн вĕсемпе пĕрле нумай вăхăт хушши вăрăм çул утса тухмалла пулать. Хальхи вăхăтри задачăсем çинчен ăнлантарса панă май Тольятти çапла каланă: текех Италие пусмăрлаттарма юрамасть. Италие вăйлă çынсем, пурте ăнланакан программа, çирĕп ирĕк тата хальхи ĕçсене тĕрĕс ăнланса пыни кирлĕ, тенĕ.

РАМСЕЙ АНГЛИ ПАРЛАМЕНТĔНЧЕ ЕВРЕЙСЕНЕ ХИРĔÇ ТУХСА КАЛАНИ

ЛОНДОН, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи парламенчĕн депутачĕ консерваторсен партийĕн членĕ Рамсей капитан, государствăна сыхласа тăрасси çинчен калакан закон тăрăх 1940 çулхи май уйăхĕнчен пуçласа 1944 çулхи сентябрь уйăхĕччен тĕрмере ларнăскер, халĕ общинăсен палатине сĕнӳ панă. Хăйĕн сĕнĕвĕнче вăл Англи правительствинчен «еврейсем çинчен калакан закона çĕнĕрен йышăнса пурнăçа кĕртме» ыйтать.

Рейтер агентстви çакна кăтартса парать: Англире «еврейсем çинчен калакан закона», еврей халăхĕн прависене чакараканскере, 1290 çулта йышăннă пулнă, 1846 çулта Виктория королева патшара ларнă вăхăтра ăна пăрахăçа кăларнă.

ОБЩИНĂСЕН ПАЛАТИНЧЕ ПРИТТ ЫЙТНИ

ЛОНДОН, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Общинăсен палатин членĕ Притт палата ларăвĕнче çар министрĕнчен çапла ыйтнă: Италире Польша офицерĕсем Англи çарĕсен офицерĕсемпе салтакĕсем валли акăлчан чĕлхипе паракан радиопередачăсенче Совет Союзне хирĕçле, тепĕр чухне Англи правительствине те хирĕçле пропаганда тунине Эсир пĕлетĕр-и? тенĕ. Çав материалсем, тенĕ малалла Притт, Англире, Италире тата Палестинăра пичетленсе тухаççĕ. Притт çар министрĕнчен тата çапла ыйтнă: Польша офицерĕсен çав ĕçне пĕтерме, Пĕрлешнĕ нацисем хушшинчи туслăха сыхласа тăрас тĕлĕшпе Англи политики çинчен тĕрĕс пĕлтерсе тăмалли условисем тумашкăн Эсир кирлĕ мерăсем йышăнма шутлатăр-и? тенĕ.

Çар министрĕ Григг çапла ответ панă: «Ку ыйту тĕлĕшпе паллă фактсене эпĕ тĕрĕслесе пăхăп. Унтан мĕнле те пулин мерăсем йышăнма кирлипе кирлĕ марри çинчен шухăшлăп», тенĕ.

«ТАЙМС» ХАÇАТ ЭСЭСОВЕЦСЕН ЛИНДЕМАН ГЕНЕРАЛĂН ШТАБĔН ĔÇĔСЕМ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» хаçатăн Фленсбургри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Германи çарĕсен Данири главнокомандующийĕ пулнă эсэсовецсен Линдеман генералĕн штабĕ халĕ те Силькеборгра посредник вырăнĕнче ĕçлет. Çав штаб урлă Монтгомерин Германи çарĕсене урăх çĕре куçарасси çинчен панă приказĕсене пурнăçа кĕртеççĕ. «Таймс» хаçатăн корреспонденчĕ çапла асăрхаттарать: Линдеман Германин Ленинград патĕнчи çарĕсен командующийĕ пулнă. Вăл хăй те тата унăн сотрудникĕсем те вăрманта çĕр айĕнчи блиндажра вырнаçнă штабра пурăнаççĕ, штабпе вара нимĕç салтакĕсенчен тăракан вăйлă хурал сыхлать. Фленсбургран пынă пĕр офицер нумаях та пулмасть çав блиндажа кĕрсе курнă. Вăл унта Линдеман радиопередатчикĕ урлă халĕ те нацистла пропаганда тунине тĕрĕслеме пынă.

ШВЕЦИ РИКСДАГĔНЧИ ПРЕНИСЕМ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнерхи хаçатсенче риксдагăн икĕ палатинче те пулса иртнĕ пренисем çинчен пичетлесе кăларнă. Кунта пренисем конституци комитечĕ правительствăна асăрхаттарнă пирки пуçланса кайнă. Пренире пуринчен ытла социальнăй ыйтусем тĕлĕшпе ĕçлекен министр Меллер хăрушсăрлăх полицине ют çĕршывсенчен тарса килнĕ антифашистсене тискеррĕн тыткаланă пирки критикленĕ, ют çĕршыв ĕçĕсен министрне Гюнтера вăл тытса пыракан тулашри политикăшăн тата Швецире тытса чарнă нимĕçсене правительство ытлашши çемçен тытса усранăшăн критикленĕ.

Риксдаг членĕ социал-демократ Северин, правительствăна нимĕçсене çемçен тытса усранăшăн критиклесе, «çакă вăл Швеци халăхне питĕ тарăхтарать», тесе каланă.

ЛАВАЛЬ ÇИНЧЕН ГРЮ КАЛАСА ПАНИ

ВАШИНГТОН, майăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство секретарĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ Грю пресс-конференцире çапла каланă: Лаваль халĕ те Испанирех пурăнать-ха, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви Испани правительствине Лавале французсен Вăхăтлăх правительстви аллине пама хушать. Ку ыйту тĕлĕшпе Испани правительствинчен мĕнле те пулин ответ илнĕ-и? тесе ыйтнине хирĕç Грю нимĕнле ответ та паман.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Япони çарĕсем Филиппин утравĕсен шутне кĕрекен Лусон тата Минданао утравĕсем çинче американецсен çарĕсене хирĕç пысăк контратакăсем тума хăтланнă, çавăн пекех тата Çĕнĕ Гвинея çинчи Австрали çарĕсене хирĕç те контратакăсем пуçласа янă. Анчах та японецсен атакисем пĕри те ăнăçлă пулман.

ВАШИНГТОН, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Окинава утравĕ çинче Америка çарĕсем японецсен оборонин ăшне нумай инçе кĕрсе кайнă. Хальхи вăхăтра Америка çарĕсем Японин позицийĕсене флангсенчен çавăрса илме тытăннă. Тинĕс пехотин чăсĕсем Наха хулинчен тинĕс еннелле куçса пыраççĕ.

Пĕлтерӳре çакна кăтартса панă: японецсен Окинава утравĕ çинче майăн 30-мĕшĕ тĕлне 61.519 çын вилнĕ тата 1.353 çын тыткăна лекнĕ.

ВАШИНГТОН, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерстви çапла пĕлтерет: июнĕн 1-мĕшĕнче ирхине американецсен «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлă бомбардировщикĕсен питĕ пысăк соединенийĕсем, Мариан утравĕсем çинчен вĕçсе улăхса, Осака хулин промышленноçлă районĕсене тапăннă.

ТОКИО, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Пусин агентстви çапла пĕлтерет: июнĕн 1-мĕшĕнче ирхине американецсен «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлă 400 бомбардировщикĕ Осака хулине тапăннă.

НОРВЕГИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ОСЛО ХУЛИНЕ ТАВРАННĂ

ЛОНДОН, майăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Осло хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, унта Лондонран Норвеги правительстви пырса çитнĕ.

КĔСКЕН

▲ Гамбург хулинче нимĕçсен «Бломпа Фосс» ятлă пысăк верфĕн директорне Рудольф Блома тытса хупнă. Ăна союзниксене хирĕç тăшманла ĕçсем тунă тесе айăплаççĕ.

▲ Белградри университета хута ярас тĕлĕшпе ĕçлекен комисси университетрах оккупантсемпе пĕрле ĕçленĕ темиçе профессора кăлармалла тунă, вĕсен ĕçне серб халăхĕн чыслăх судне панă. Вăл профессорсем çаксем: Никола Попович, Юстин Попович тата ыттисем те.

▲ Англи çарĕсем Данцигра Гитлер гаулейторĕ пулса ĕçленĕ Форстера тытса хупнă. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти энергетика техникумĕ I-мĕш, II-мĕш тата III-мĕш курссене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Çак специальноçсене вĕренме илеççĕ: а) техник-дизелист пулма, б) техник-теплотехник пулма тата в) техник-строитель пулма.

Техникумра 4 çул вĕренмелле.

Техникума 14 çултан пуçласа 25 çула çитнисене илеççĕ.

I-мĕш курса 7-мĕш класран «отлично» паллăсемпе вĕренсе тухнисене экзаменсăр илеççĕ, ыттисене вырăс чĕлхипе, математикăпа тата СССР Конституцийĕпе экзамен парсан илеççĕ.

II-мĕш курса вăтам шкулăн 9-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисене экзаменсăр илеççĕ, анчах та кайран вара вĕсен техникумăн 1-мĕш курсĕнче вĕреннĕ техникăлла предметсемпе испытани тытмалла пулать. II-мĕш курса тата ытти техникумсенче çав специальноçсене вĕренекенсене илеççĕ.

III-мĕшпе IV-мĕш курссене ытти техникумсенче çав специальноçсене тата çав курссенче вĕреннĕ çынсене, мĕншĕн те пулин техникумран вĕренсе тухайманскерсене, илеççĕ.

Техникумран икĕ çул хушшинче вĕренсе тухмалли программăллă III-мĕш курса вăтам шкултан вĕренсе тухнисене экзаменсăрах илеççĕ.

Техникума кĕме пĕлӳ ситеймен çынсене техникума кĕме хатĕрлемелли курс организациленеççĕ, унта укçасăрах вĕрентеççĕ.

Шупашкарти Стройтехникумра вĕреннĕ çынсене, мĕншĕн те пулин унтан вĕренсе тухайманнисене, ятарласа организацилекен группăсене вĕренме илме чĕнеççĕ.

Заявленисемпе пĕрле çак документсене тăратмалла: а) автобиографи, б) хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, в) ăçта миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство, г) 2 фотокĕрчĕк.

Техникума кĕмелли экзаменсем сентябрĕн 21-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ. Техникумра октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ.

Вĕренме кĕнисене стипенди пăраççĕ, столовăйра апатлантараççĕ, общежитие вырнаçтараççĕ, выртса тăмалли вырăн параççĕ, Хĕрлĕ Çара илес тĕлĕшпе отсрочка параççĕ.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, ул. Плеханова, 7, Энергетической техникум.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 4—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, издательство конторин — 0—23.

Типографи № 1 Управлени полиграф. промышленность при СНК ЧАССР. Заказ № [illegible] [illegible]

НТ 00601